25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 СЕНТЯБРЬ 23 ЮНКУН 222 (6157) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

# Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

**МТС-сен Политотделĕсем тăратнă тăрăх, пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартнăшăн тата машинăсемпе тракторсен паркĕпе лайăх усă курнăшăн, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:**

**Елчĕк МТС-ĕ тăрăх:**

88. **Комбайнер Алексей Петрович Павлов.** Вăл «Коммунар» маркăллă комбайнпа ĕçлесе 220 гектар тырпул вырса пуçтарнă, планра 127 гектар кăтартнă пулнă.

**Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕ тăрăх:**

89. **Ф. Т. Афондеркин юлташ бригадир пулса тăракан трактор бригади.** Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне, авăн çапассисĕр пуçне, 116 процент тултарнă, 200 килограмм горючи перекетленĕ.

90. **А. М. Макаров юлташ бригадир пулса тăракан трактор бригади.** Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне, авăн çапассисĕр пуçне, 111,6 процент тултарнă, 2.451 килограмм горючи перекетленĕ.

91. **Трактористка Дария Васильевна Илюшкина.** Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 155 процент тултарнă, 636 килограмм горючи перекетленĕ.

**Вăрмар МТС-ĕ тăрăх:**

92. **10-мĕш номерлĕ трактор бригади** (бригадирĕ **И. Уливанов** юлташ). Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне, авăн çапассисĕр пуçне, 112,4 процент тултарнă, 1.498 килограмм горючи перекетленĕ.

93. **1-мĕш номерлĕ трактор бригади** (бригадирĕ **С. Чернов** юлташ). Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне, авăн çапассисĕр пуçне, 110,9 процент тултарнă, 621 килограмм горючи перекетленĕ.

94. **Хĕрарăмсен 2-мĕш номерлĕ трактор бригади** (бригадирĕ **С. Данилов** юлташ). Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне, авăн çапассисĕр пуçне, 110,3 процент тултарнă, 1.055 килограмм горючи перекетленĕ.

95. **Тракторист Г. Артюков юлташ.** Вăл У—2 маркăллă тракторпа ĕçлесе çулталăкри ĕçсен планне 210 процент тултарнă, 207 килограмм горючи перекетленĕ.

96. **Трактористка И. Ануфриева юлташ.** Вăл У—2 маркăллă тракторпа ĕçлесе çулталăкри ĕçсен планне 200 процент тултарнă, 41 килограмм горючи перекетленĕ.

97. **Комбайнер М. Илларионов юлташ.** Вăл «Коммунар» маркăллă комбайнпа ĕçлесе 22 кун хушшинче 231 гектар çинчи тырпула вырса пуçтарнă, планра 110 гектар кăтартнă пулнă.

## Фронта вăйлăнрах пулăшни — пирĕн çĕнтерĕвĕн никĕсĕ

Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарнă уява кăçал эпир тăван çĕршывăн чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн пыракан отечественнăй вăрçăн хаяр та йывăр кунĕсенче кĕтсе илетпĕр. Иккĕмĕш çул ĕнтĕ нимĕç фашисчĕсем пирĕн ялсемпе хуласене, шкулсемпе пурăнмалли çуртсене çĕмĕрсе ишĕлтереççĕ, пирĕн халăхăн пурлăхне çаратаççĕ, совет çыннисене, айăпсăр ачасемпе хĕрарăмсене тискеррĕн пусмăрласа асаплантараççĕ.

Пирĕн геройла Хĕрлĕ Çар тăшманăн войскисене хирĕç паттăррăн, түсĕмлĕн кĕрешет. Йывăр çапăçура тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене пинĕ-пинĕпе пĕтерсе пырать. Анчах нимĕç захватчикĕсем халĕ те совет çĕршывĕн центрĕсем патнелле кĕрсе кайма хăтланаççĕ.

Çак хаяр кунсенче кашни совет çынни хăйĕн пĕтĕм вăйне, пултарулăхне Хĕрлĕ Çара вăйлăн пулăшнă çĕре хумалла. Кашăн ăшĕнче совет патриочĕн хĕрӳллĕ чĕри тапать, çавă пирĕн çĕршыва çаратма килнĕ нимĕç захватчикĕсене пĕр çын юлмиччен пĕтерсе тăкмасăр лăпланса лармалла мар. Хамăрăн пĕтĕм вăя тискер тăшмана пĕтерсе тăкнă çĕре хумалла.

Тăшмана пĕтерсе тăкса çĕнтерӳ тума Хĕрлĕ Çара тырпул, техникăллă культурăсем, пахча-çимĕç, аш-какайпа сĕт-çу кирлĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ Хĕрлĕ Çарăн воинĕсене тата фронт заказĕсене тăвакан предприятисемпе заводсенче ĕçлекен рабочисене ялхуçалăхĕн продукчĕсене ытлăн-çитлĕн парса тăрасси колхозниксемпе колхозницăсен, ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçсыннисен чыслă обязанноçĕ пулса тăрать.

Совет государстви кăçал 25 çул тултарать. Çак аслă уява пĕтĕм совет халăхĕ, унпа пĕрле Хĕрлĕ Çарăн геройла воинĕсем те, çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илессĕ. Владимир Ильич ячĕпе тăракан 70-мĕш номерлĕ заводри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем фронта вăйлăн пулăшас тĕлĕшпе пĕтĕм Совет Союзĕнчи ĕçсыннисене уяв умĕнхи социализмлă ăмăртăва тухма, ĕçре пысăкрах çитĕнӳсем тума чĕнчĕç. Вĕсен примерĕпе Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва пирĕн республикăри предприятисемпе колхозсем те активлăн хутшăнса пыраççĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсем авăн çапас ĕçе октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне, кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех вĕçлеме, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана çак кунсенчех пурнăçлама обязательствăсем илчĕç.

Паян хаçатра пичетленсе тухакан çырура Алтай крайĕнчи Смоленски районри колхозниксемпе колхозницăсем, трактористсемпе трактористкăсем, комбайнерсемпе комбайнеркăсем пĕтĕм Союзри колхозсемпе совхозсене, ялхуçалăхĕнчи пĕтĕм ĕçсыннисене фронта вăйлăн пулăшас тĕллевпе Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва тухма чĕнеççĕ. Вĕсем аслă уява ялхуçалăхĕнче пысăк ӳсĕмсем тунипе кĕтсе илме пулаççĕ.

Алтай крайĕнчи Смоленски районри колхозниксемпе колхозницăсем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса кĕлтесене капана хывас ĕçе октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне, пур йышши тырăсене те çапса илес ĕçе октябрĕн 21-мĕшĕ тĕлне, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес тата вĕсене государствăна парса татас ĕçе ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех пурнăçлама пулаççĕ. Кĕрхи çĕртмене вĕсем планпа пăхнинчен 3.000 гектар ирттерсе туса хăвараççĕ, октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне колхозсен обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕн витисене хĕле валли юсаса çитереççĕ, выльăх-чĕрлĕхĕн йышне планпа пăхнинчен чылай ирттерсе ĕрчетме пулаççĕ.

Пирĕн республикăри колхозсен Смоленски районри колхозсен чĕнĕвне йышăнса пурнăçа кĕртме çеç мар, ялхуçалăхĕнчи чылай ĕçсене вĕсенчен хăвăртрах вĕçлеме те май пур. Колхозниксемпе колхозницăсем, трактористсемпе комбайнерсем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва кашниех активлăн хутшăнни, ялхуçалăхĕнче татă тимлĕрех ĕçлени çеç кирлĕ.

Пирĕн Хĕрлĕ Çар ирĕклĕхшĕн кĕрешекен пĕтĕм тĕнче умĕнче мухтава тухрĕ. Паттăр воинсем тăшмана хирĕç пурнăçа шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Вĕсен вăйĕ — совет халăхĕн иксĕлми çирĕп вăйĕнчен, пĕрлĕхĕнчен тухса тăрать. Совет халăхĕ хăйĕн тăван çарне вăйлăн пулăшса тăрать, юратать. Вăл юратăва Шупашкарти чăлха фабрикинче ĕçлекен рабочисемпе работницăсен паян пичетленекен çырăвĕ тепĕр хут çирĕплетсе парать. Вĕсем Октябрьти социализмлă аслă революци XXV çул тултарнă ятпа Хĕрлĕ Çар воинĕсем патне уяв парнисем ярса пама чĕнсе, пĕтĕм рабочисемпе работницăсен, колхозниксемпе колхозницăсен хĕрӳ кăмăлне шухăшне каласа параççĕ.

Хĕрлĕ Çар воинĕсем патне аслă уяв парнисем ярса парас ĕç республикăри чылай колхозсенче, предприятисемпе заводсенче пуçланнă ĕнтĕ. Вĕсен çак питех те кирлĕ пуçарăвне республикăри пур предприятисемпе колхозсенче те анлăн сармалла. Хамăр шефа илнĕ Хĕрлĕ Çарăн Н-ски чаçне паха парнесем хатĕрлесе ярса памалла. Вĕсем, пирĕн тăвансем, Хĕрлĕ Çарăн ытти воинĕсем пекех, нимĕç оккупанчĕсене вăйлăн çĕмĕрсе пыраççĕ. Пирĕн парне тăшмана тата вăйлăрах çĕмĕрме фронтовиксене пулăшакан вăй пулса тăрĕ.

## Орденлă Чăваш республикинчи рабочисемпе работницăсене, колхозниксемпе колхозницăсене, совет интеллигенцине

**Хаклă юлташсем!**

Пирĕн часть çулталăк тултарнине уявланă кун эпир, боецсемпе командирсем, комиссарсемпе политработниксем сирĕн пата хĕрӳллĕ боевой салам ярать.

Пирĕн чаçе 1941 çулти сентябрĕн 4-мĕшĕнче пухса йĕркелеме тытăннă. Ноябрĕн 26-мĕшĕнче вăл фронта килчĕ. Çак çулталăк хушшинче пирĕн часть, хăйĕн çулĕ çинче фашистла ирсĕрсене тасатса пырса, халăх пурăнакан пунктсене 400 çити, вăл шутра 2 хулана ирĕке кăларчĕ, 500 километр малалла, хĕвеланăçнелле кайрĕ. Трофейăсем нумай тытса илчĕ. Пĕр Сухиничи хулинче кăна 499 вагон, 20 паровоз, 142 автомашина, 3 танк, 2 самолет, 4 планер, 116 лаша, боеприпассем тиенĕ 10 вагон, 11 мотоцикл, 4 йывăр оруди, 3.000 пичке тата ытти çар пурлăхĕсемпе материалсем тытса илнĕ. Фашистла мерзавецсене 10 пин çынна çити пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн çĕршыв йывăр та хăрушă кунсене пурăнса ирттерет. Пирĕн тăван çĕршывăн кунçулĕ — Хĕрлĕ Çар аллинче. Совет халăхĕн ирĕклĕхне çăлса хăварăпăр-и е никама пăхăнманлăха, чыслăха тата ирĕклĕхе çухатăпăр-и,— çак ыйтăва халĕ вăйлă çапăçусем хирĕнче татса параççĕ. Паян Хĕрлĕ Çар тата совет халăхĕ нихăçанхинчен ытларах çирĕп пулни, çĕнтерӳ тăвас тĕлĕшпе çирĕп шухăшлă пулни кирлĕ.

Совет воинĕсен чĕрисем гитлерла бандитсене курайманнипе тулнă. Нумай пулмасть пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн подразделенисем тăшмана ним шеллемесĕр аркатрĕç. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 1.300 çын ытла пĕтрĕç, вăл шутран 345 çын вилнĕ. Фашистсем пĕр кун хушшинче пирĕн пĕр батальон çине тăватă хутчен контратака турĕ. Çавсене пурне те хире-хирĕç тăрса çапăçса сирсе янă. Çак çапăçура батальон командирĕ Ежов юлташ хăй 22 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Пулеметчик-комсомолец Виноградов фашистсене 60 метр çывăхне янă та çывăхран тĕллесе персе 35 нимĕçе вĕлернĕ.

Хаяр тăшмана хирĕç чăваш халăхĕн ывăлĕсем хастарлă çапăçрĕç. Сержант Иванов (Комсомольски районран) паттăрлăхпа çирĕплĕх кăтартрĕ. Тепĕр командирпа пĕрле Иванов çĕрле нимĕçсен 16 разведчикĕ эпир тăракан вырăналла пынине асăрханă. Вăл фашистсене 20 метр юличчен çывăха янă та вĕсене пурне те пĕтерсе тăкнă. Лейтенант Гаврилов, санинструктор-орденоносец Сандимиров, пулеметнăй ротăн командирĕ лейтенант Константинов тата сирĕн ытти земляксем те хăюлăхпа паттăрлăх кăтартрĕç.

— Санăн кашни кун нимĕçсене пĕтерсе тăкмалла, — тесе калатпăр эпир кунта пĕр-пĕрне. Пирĕн боецсем кашни кунах фашистсене персе ӳкересшĕн тăрăшаççĕ, вĕсене тĕл тивертсе пĕтерсе тăкаççĕ. Юлашки вăхăтра кăна пирĕн снайперсем 846 фашиста пĕтерсе тăкрĕç. Нимĕç оккупанчĕсемпе çапăçнă çĕрте паттăрлăх кăтартнăшăн правительство боецсене, командирсене тата политработниксене 200 çынн аорденсемпе медальсем парса наградăларĕ.

Анчах эпир хамăрăн çитĕнӳсемпе лăпланса лармасăр, хамăрăн çар пĕлĕвĕсене ӳстерме тимлĕн тăрăшатпăр, Сталин вĕрентнĕ пек, тăшмана тĕл тивертес, тĕлçапас искусствăна вĕренсе пыратпăр.

Хаклă юлташсем! Эпир сире çакна шантарса калатпăр: совет çĕрĕн пĕр вершукне те тăшмана памастпăр. Пĕр утăм та каялла чакмастпăр. Гитлерла бандитсене хирĕç юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçатпăр, анчах вĕсене малалла килсе кĕме памастпăр.

Фашистла çынçиенсене эпир вĕсен мĕнпур ирсĕрлĕхĕсемшĕн çапатпăр, вĕсене эпир пур тискерлĕхĕсемшĕн те тавăратпăр. Пулăслăх пирĕнте. Эпир ăна шанса тăратпăр. Тăшмана аркатса тăкатпăр.

Хаклă юлташсем! Тылра сире валли хĕçпăшалсем хатĕрлекен, металл, çĕр кăмрăкĕ, нефть тупакан, тырпул тăвакан ĕççыннисем тăрăшса ĕçленине эпир кулленех туятпăр. Эсир пурнăçа шеллемесĕр тăрăшса ĕçлени пирĕн вăйхала ӳстерет. Сирĕнпе пĕрле эпир Чăваш республикинче акана ăнăçлăн ирттернĕшĕн саванатпăр, вăрçă вăхăтĕнчи вăйлă тырпула пухса кĕртес тĕлĕшпе эсир пурнăçа шеллемесĕр ĕçленипе, республикăри производство предприятийĕсен коллективĕсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура тунă çĕнтерӳсемпе мухтанатпăр.

Юлташсем, производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тума тăрăшăр. Фронт валли хĕçпăшал, боеприпассем нумайрах парăр. Тырпулсене пухса кĕртнĕ чухне пĕр пĕрчĕ те уя тăкăнса ан юлтăр. Вăй-халсене тата ытларах пухса ĕçлĕр. Фронтра хастарлă та çирĕп пулнипе, тылра пурнăçа шеллемесĕр ĕçленипе кăна эпир пирĕн тăван çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăха — фашистсен чурисем пулас, пирĕн ирĕклĕхе пĕтерсе тăкас хăрушлăха сирсе яма пултаратпăр.

Большевиксен партийĕпе Сталин юлташ тавра тата тачăрах пĕрлешĕр. Тăшмана ытларах курайми пулар, йăвашчунлăх кăшт та пулмалла мар, тăшмана аркатса тăкма мĕнпур вăя парар. Нимĕç оккупанчĕсене — вилĕм!

Сывă пултăр пирĕн большевикла парти!

Сывă пултăр пирĕн аслă çулпуç Сталин юлташ!

**Часть командирĕ ЕРОХИН.**
**Часть военкомĕ БАХТИН.**
**Политотдел начальникĕ АКОПДЖАНЯН.**

## Праздник ячĕпе Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли парнесем пухар

Октябрьти революци пулнăранпа XXV çул тултарать. Çак аслă праздника Совет Союзĕнчи ĕççыннисем вăрçăн йывăр кунĕсенче кĕтсе илеççĕ.

Эпир пĕлетпĕр, тăшман халĕ вăйлăха. Ăна тĕппипех пĕтерес тесен, пирĕн тылра пурнăçа шеллемесĕр ĕçлес пулать, Хĕрлĕ Çарпа унăн мухтавлă боецĕсене пур майсемпе те пулăшса пырас пулать.

Эпир, Шупашкар районĕнчи Шĕнерпуçĕнчи «Молния» колхоз колхозникĕсем, кăçал пĕлтĕрхинчен нумай хут лайăхрах ĕçлерĕмĕр. Тырпула вăхăтра вырса илтĕмĕр, авăн çапса пĕтертĕмĕр, государство умĕнчи парăмсене татрăмăр. Эпир вăрçă ыйтнă пек ĕçлерĕмĕр. Çакă та фронта пулăшни пулать.

Тăшмана хирĕç хăюллăн кĕрешекен хамăрăн боецсем çинчен эпир пĕр минутăлăха та манмастпăр. Пухăва пухăнса, пирĕн колхозниксем Октябрьти социализмлă революци ячĕпе Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне парне яма йышăнчĕç. Парне пама эпир колхозран 3 центнер тулă çăнăхĕ, 16 килограмм услам çу, 500 çăмарта, 25 чăхă, 80 килограмм сысна какайĕ, 60 литр эрех тата пахча-çимĕçсем уйăратпăр. Кунсăр пуçне, колхозниксем 150 çăмарта, 3 килограмм услам çу, 15 чăхă, 15 килограмм сухари пачĕç.

Эпир пирĕн районри тата пĕтĕм Чăваш республикинчи пур колхозниксене те пирĕн примера йышăнма чĕнетпĕр.

Хамăрăн Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшар, тăшмана çĕнтерес вăхăта çывхартар!

**Колхозниксен пухăвĕ хушнипе алă пуснă:** колхоз председателĕ **Т. ИВАНОВ;** правлени членĕсем: **Н. ИВАНОВ, Г. САМАРИН, Е. ИВАНОВА;** колхозницăсем: **ЯКОВЛЕВА, СЕМЕНОВА, ГРИГОРЬЕВА, ИВАНОВА, ОСИПОВА.**

## Чăваш республикинчи мĕнпур рабочисемпе колхозниксене тата интеллигенцие

**Хаклă юлташсем!**

Пĕтĕм тĕнчери историн çĕнĕ саманине уçнă Октябрьти Социализмлă Аслă Революцин XXV-мĕш уявĕ çывхарса килет. Çак çирĕмпилĕк çул хушшинче пирĕн çĕршыв хăватлă держава пулса тăчĕ. Совет саманинче çĕнĕ обществăна тăвакансен ăрăвĕ ӳссе çитĕнчĕ. Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем, хăйсен фабрикисемпе завочĕсен, хăйсен çĕрĕн, хăйсен кунçулĕн хуçисем пулса тăрса, этемлĕх историйĕнче ирĕклĕ ĕçĕн савăнăçне малтанхи хут пĕтĕм чун-чĕререн туйса илчĕç. Совет влаçĕ ĕççыннисене аслă та ырă пурнăç туса пачĕ, ун çинчен Сталинла Конституцире ылттăн саспаллисемпе ĕмĕрлĕхех çырса хунă.

Çав ырă пурнăçа, пирĕн кунçулăмăра нимĕçсен фашистла вăрă-хурахĕсем килсе тапăнчĕç. Пирĕн уй-хирсем юнпа шӳрĕç, пирĕн хуласемпе ялсем вутра çунаççĕ, пирĕн тăвансем нимĕç оккупанчĕсен пусмăрĕ айĕнче асапланаççĕ.

Тăшманăн йыткĕтĕвĕсем тăван çĕршыва шала çĕмĕрсе кĕчĕç. Нимĕнле çухатусем тӳснине пăхмасăр, хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсен виллисем тăрăх утса, вĕсем малалла талпăнаççĕ. Тăшман хăйĕн юнлă çĕççине Совет Кавказĕ çине çĕкленĕ, вăл вырăс халăхĕн ирĕклĕх юханшывĕ патнелле — Атăл патнелле урса кайсах шăвать. Пирĕн тăван çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăх нихăçанхинчен те пысăк. Тăван çĕршыв умĕнчи аслă отвотлăха ăнланса илсе, совет воинĕсем тăван çĕрĕн кашни пусăмне паттăррăн хӳтĕлеççĕ.

Гитлерла Германипе вĕсен тарçисен вăрă-хурахла кĕтĕвĕсене хирĕç хаяррăн çапăçса, пирĕн Хĕрлĕ Çар Аслă Октябрĕн пĕтĕм тĕнчери историллĕ çĕнтерĕвĕсене хӳтĕлет. Хĕрлĕ Çар тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе пырать. Хамăрăн тăван çĕршыва мĕнпур совет халăхĕ хӳтĕлет. Тыл—фронтăн тĕрекĕ. Пирĕн халăх хăйĕн воинĕсене хĕрӳллĕ юратупа хавхалантарса пырать тата тăшмана çапса аркатма мĕн кирлине пурне те парса тăрать.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революцин XXV-мĕш уявне палăртас майпа Шупашкарти чăлха çыхакан фабрикăн коллективĕ Чăваш республикинчи мĕнпур рабочисемпе колхозниксене тата интеллигенцие пирĕн республика шефа илнĕ çар чаçĕ валли, фронтра паттăррăн кĕрешекенсем валли, Октябрь уявĕ ячĕпе парнесем пухассине организацилеме чĕнет.

Шупашкарти чăлха çыхакан фабрикăн коллективĕ хăй енчен коллективлă тата уйрăмшар посылкăсемпе 200 мăшăр çăм чăлха, 40 катăк супăнь, 40 флакон одеколон, 50 килограмм канфет, 50 килограмм пĕремĕк, 10 литр эрех тата ытти япаласем те яма сăмах парать.

Орденлă Чăваш республикинчи мĕнпур ĕççыннисене эпир Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем валли Октябрь явĕ ячĕпе уйрăмшар тата коллективлă парнесем пухас ĕçе активлăн хутшăнма чĕнетпĕр.

Умра хĕрӳллĕ те йывăр çапăçусем. Çав çапăçусем пиртен организованно та çирĕп пулма, хурçă пек çирĕп дисциплина тытма ыйтаççĕ. Хамăрăн вăйсене хĕрхенмесĕр, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе, эпир тăшмана чарса лартма, ăна сирсе пăрахса çапса аркатма Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне мĕнпур вăйран пулăшăпăр.

Тăшмана çапса акатмалла, ăна çапса аркататпăрах.

Сывă пулччăр пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ воинсем!

Сывă пултăр пирĕн çулпуç, пирĕн юратнă полководец—Сталин юлташ!

**Çырăва Шупашкарти чăлха çыхакан фабрикăри рабочисемпе служащисен сентябрĕн 21-мĕшĕнче пулнă митингĕнче йышăннă.**

## Тир-сăран комбинатĕнче

Водопьянов ячĕпе тăракан тир-сăран комбинатĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва тухса çакăн пек ĕçлеме йышăннă:

Атă-пушмаксене лайăх пахалăхлă туса хатĕрлеме, планпа пăхса хунинчен 5 процент ытларах туса кăларма;

ĕç тухăçлăхне 10 процент ӳстерме;

электроэнергие планпа пăхнинчен 5 процент сахалтарах, топливăна — 6 процент сахалтарах расходлама;

хытă сăрансене виçĕ пин дециметр тата çемçе сăрансене 2,5 пин дециметр перекетлеме;

рационализаторла сĕнӳсене 15-рен кая мар пухма; çĕнĕ рабочисене 20 çын вĕрентсе хатĕрлеме пулнă.

—⊙—

## Пионерсем пучахсене пухрĕç

КАЛИНИНО. Тури Карачурари пуçламĕш шкулта вĕренекен ачасен отрячĕ урoксем пĕтнĕ хыççăн, учительница Анисия Комарова юлташ ертсе пынипе, Анат-Карачурари «Социализм çулĕпе» колхоз уйхирĕсенче çĕмел вырăнĕсенчи пучахсене пухрĕ. Отряд кулленех 12-шер килограмм пучах пухрĕ. Вĕренекенсен тепĕр отрячĕ авăн çапнă çĕрте хутшăнса ĕçлет.

## Совет Союзĕнчи колхозниксемпе колхозницăсене, трактористсемпе трактористкăсене, комбайнерсемпе комбайнеркăсене, ялхуçалăхĕнче ĕçлекен мĕнпур работниксене

**Хаклă юлташсем!**

Октябрьти социализмлă Аслă революци XXV çул тултарнине эпир йывăр та хăрушă кунсенче кĕтсе илетпĕр. Усал та тискер тăшман пирĕн çĕр çине, пирĕн ялсемпе хуласене çĕмĕрсе кĕчĕ, вăл çулталăк ытла ĕнтĕ пирĕн колхозсене, килçуртсене, шкулсене варварла çĕмĕрсе пырать, хăйĕн ирсĕр аттипе пирĕн тухăçлă уйхире таптать, совет çыннисенчен мăшкăллать. Нимĕç юнĕçенĕсем миçе çынна персе тата çакса вĕлермерĕç-ши, миçе çамрăк ачан пурнăçне татмарĕç-ши, миçе вырăса, украинеца, белоруса тыткăна илсе ирĕксĕрлĕхе, каторгăлла ĕçе хăваласа каймарĕç пулĕ!

Колхозник юлташсем! Эпир пирĕн тăвансем нимĕç пусмăрĕнче вилнине, совет хулисемпе ялĕсен урамĕсем пирĕн ачасемпе хĕрарăмсен тата старриксен юнĕпе пĕвеннине, пирĕн тырра Германие нимĕç йыттисем валли илсе кайнине малашне те чăтса тăрăпăр-и вара? Çук, юлташсем! Кашăн кăкăрĕнче совет патриочĕн чĕри тапать—çавă вара пирĕн çĕршыва çаратма килнĕ юлашки нимĕçе пĕтерсе тăкиччен лăпланмалла мар. Хамăрăн пĕтĕм вăя хаяр тăшмана пĕтерсе тăкас ĕçе хурар!

Пирĕн Хĕрлĕ Çар тăшмана çĕнтересси пирĕнтен, колхозлă хресченсенчен, нумай килет. Çăкăрсăр, техникăлла культурăсемсĕр, пахча-çимĕçсемсĕр, какайсăр, çусăр, çăмсăр вăрçма çуккине пурте лайăх пĕлеççĕ. Эпир Совет Союзĕнчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, машинно-тракторнăй станцисен мĕнпур работникĕсене хирти ĕçсенче икĕ хут, виçĕ хут ытларах вăй хурса ĕçлеме, пĕтĕм тырпула пĕр пĕрчĕ юлмиччен пĕтĕмпех чи кĕске срокра пухса кĕртме, кĕлтесене капана хывса çитерме, тырра çапса пĕтерме тата хамăрăн государство умĕнчи обязательствăсене чыслăн пурнăçа кĕртме чĕнетпĕр. Эпир техникăпа çу культурисене пĕтĕмпех пуçтарса кĕртме чĕнетпĕр. Çĕрулмине пĕр çĕрулми хăвармасăр кăларса кĕртме, хĕрлĕ кăшмана, пахча-çимĕçсене пĕтĕмпех пуçтарса кĕртме тата хатĕрлев пункчĕсене леçме, вĕсене хĕлле овощехранилищесенче, буртăсенче, траншейăсенче лайăх сыхласа усрама чĕнетпĕр. Кĕрхи çĕртмене туса пĕтерме чĕнетпĕр. Хĕл валли выльăх-чĕрлĕх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлесе хума тата выльăх-чĕрлĕх валли ăшă витесем хатĕрлесе хума чĕнетпĕр. Мĕнпур ялхуçалăх машинисене типтерлесе лартма, тасатса, çу сĕрсе хума тата пуçтарса хума чĕнетпĕр. Эпир çак ĕçсене мĕнтери хăвăртрах тăвăпăр—фронтсенче ĕçсем çавăн чухлĕ лайăхрах пулса пырĕç, ылханлă нимĕç захватчикĕсене çапса аркатма çавăн чухлĕ çăмăлтарах пулĕ.

Аслă Октябрь XXV çул тултарнă ятпа пĕрчĕллĕ тырăсене вырса пĕтерсе, эпир хамăр çине çĕнĕ обязательствăсем илетпĕр тата Совет Союзĕнчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, ялхуçалăхĕнче ĕçлекен мĕнпур работниксене пирĕн пек тума чĕнетпĕр:

1. Кĕлтесене октябрĕн 1-мĕшĕччен капана хывса çитермелле.

2. Пур культурăсене те октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне çапса пĕтермелле.

3. Государствăна тырă, çĕрулми тата пахча-çимĕçсем памалли мĕнпур обязательствăсене ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне, ытти ялхуçалăх продукчĕсене парассине закон кăтартнă сроксенче пурнăçламалла.

4. Кĕрхи тырăсене планран ирттерсе 4.000 гектар акса хăвармалла.

5. Кĕрхи çĕртмене планран ирттерсе 3.000 гектар сухаламалла.

6. Выльăх-чĕрлĕх витисене пурне те хĕл валли октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне юсаса, ăшăтса, хатĕрлесе çитермелле.

7. Çак çулăн юлашки уйăхĕсем хушшинче майракаллă шултра выльăхăн хисепне 870 пуç, сыснасене 1.200 пуç, сурăхсене 2.000 пуç чухлĕ ӳстермелле.

Колхозник юлташсем! Тылра хамăр вăя шеллемесĕр ĕçлесе Германин вăрă-хурахла бандисене тытса чарма тата аркатса тăкма хамăрăн Хĕрлĕ Çара пулăшар. Нимĕçе совет çыннисенчен мăшкăллама памастпăр. Çирĕм пилĕк çул каялла пирĕн аттесемпе тăвансем юн юхтарса çĕнтерсе илнĕ тăван çĕршыва мăшкăллама-кӳрентерме памастпăр.

Сывă пултăр пирĕн тăван Совет влаçĕ!

Сывă пултăр пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр пирĕн аслă çулпуç, атте, юратнă Сталин юлташ!

Пĕтĕм вăя—тăшмана аркатса тăкма! Нимĕç оккупанчĕсене — вилĕм!

**Алтай крайĕнчи Смоленски районри колхозниксемпе колхозницăсем, трактористсемпе трактористкăсем, комбайнерсемпе комбайнеркăсем:**

**П. ЖЕЛЕЗНОВА, Н. ИВАНОВ, Е. ОВЧИННИКОВА, В. НЕВЕРОВ, Е. СУХИНИНА, О. ДЕНИСОВА, М. АНТОНОВА, А. РЫБИНА, Е. КУЗИНА, С. КАЗАНЦЕВ, А. ТИШКОВ, А. БОГОМОЛОВ, И. АНДРОСОВ, Е. ШАБАЛИНА, И. КРАСНОСЛОБОДЦЕВА, М. СОКОЛОВ, И. ПОЛЧЕВ, А. СМОЛЯКОВА, Я. ШАЙНОВА, Е. ЛОБАНОВА, П. СВИРИДОВ, Т. КУРНОСОВ, Ф. КОРЧАГИН, Е. ДЕНИСОВ, П. ТАРАБРИН, П. ЗАРУБИН, А. КУНИЦЫН, А. ВОРОНИН, И. ОМЕЛЬЧЕНКО, П. ОВДИН, Г. БАЛАНДИН, Е. КИСЕЛЕВА, Г. СКОРИКОВ т. ыт. те.**

## ВЦСПС-ра

**Пĕр промышленноçăн заказĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлекен заводсен работникĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1942 çулти август уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕн Президиумĕ пĕр Халăх Комиссариачĕ панă заказсене пурнăçа кĕртнĕ тата ирттерсе пурнăçланă заводсен шутĕнче главнăй инженер пулса Черничкин юлташ ĕçлекен завода палăртнă.**

# Совет Информаци Бюровĕнчен

## Сентябрĕн 21-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 21-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Моздок** районĕнче хаяррăн çапăçнă. Ытти фронтсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Сентябрĕн 20-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 8 танкне тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 70 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă, артиллерин 7 батарейине тата минометсен 3 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине 2 ротăна çити саппаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче хаяр çапăçусем пынă. Пĕр участокра нимĕç пехотин полкĕ танксем пулăшнипе темиçе хутчен те атакăсем туса пăхнă. Противникăн пур атакисене та сирсе янă, ăна пысăк çухатусем тӳстернĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем урамри çапăçура 230 гитлеровеца вĕлернĕ тата 24 автомашинăна, минометсен 3 батарейине пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем противника каялла чакарнă, 2 танк, 12 автомашина тата нимĕçсен пехотине 2 ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Моздок районĕнче противник, автоматчиксем тата танксен пысăк ушкăнне пĕр çĕре пухса, халăх пурăнакан пĕр пункт çине наступлени пуçласа янă. Пирĕн боецсен Русадзе лейтенант ертсе пыракан ушкăнĕ тăшманăн ытларах вăйĕсемпе çапăçма тытăннă. Кăçĕн лейтенант Эбралидзе ертсе пыракан противотанковăй пушал расчечĕ нимĕçсен 8 танкне тата чылай гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Бронебойщиксем Боголадзе, Горгадзе тата Забарадзе юлташсем, старши сержант Хитнадзе ертсе пынипе противникăн 4 танкне сунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Нимĕçсен 250 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем противникпа оборонăра тăрса çапăçнă. Пирĕн разведка отрячĕ икĕ кун хушшинче 4 автомашина тата нимĕçсен 50 салтакне офицерне пĕтерсе тăкнă, унтан противникăн боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă. 5 краснофлотецпа кĕçĕн командир Петин юлташ разведкăра çӳренĕ чухне тăшманăн засади çине пырса кĕнĕ. Хаяр тытăçура пирĕн морякĕсем штыкпа тата гранатăсемпе çапăçса 30 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Синявино районĕнче пирĕн чаçсем противникăн темиçе контратакине сирсе янă. Рогинский юлташ командир пулса тăракан часть нимĕçсене пĕр çирĕплетнĕ пунктран хăваласа кăларнă. Çав çапăçура 30 блиндажпа землянка тытса илнĕ тата нимĕçсен 3 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Украинăри партизансен отрячĕ нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем йышăннă тутунçул станцине икĕ хутчен умлăкыçлă пырса çапнă. Партизансем нимĕçсен 67 салтакне вĕлернĕ, станцири çуртсемпе çулсене ишĕлтерсе пĕсса пăрахнă тата çар турлăхĕ хунă склада пĕтерсе тăкнă.

* * *

Румынсен 4-мĕш дивизийĕнчи 5-мĕш пехотнăй полкран тыткăна лекнĕ лейтенант Александр Радою çапла каласа панă: «Юлашки çапăçусенче пирĕн дивизи йывăр çухатусем тӳсрĕ. Вырăссен миномечĕсем нумай ротăсене пĕтерсе тăкрĕç. Çав çухатусене пула полкра дисциплинăна пăснă фактсем нумайланса кайрĕç. Нумаях пулмасть, 5-мĕшпе 6-мĕш ротăсенчи салтаксем атакăна кайма отказ пачĕç. Майор Маздрас атакăна каймалли приказа виçĕ хутчен каларĕ, анчах çапах та вырăнтан хăшĕ-пĕри кăна çĕкленчĕç. Çавăн çинчен нимĕçсем пĕлнĕ. Вара вĕсем ним систермесĕрех румынсем çине пеме пуçларĕç. Румынсен салтакĕсем вĕсене хирĕç пеме тытăнчĕç. Икĕ енчен те вилнисемпе аманнисем пулчĕç, вĕсем темиçе вунă çынах çитрĕç. Халĕ ĕнтĕ салтаксем кăна мар, румынсен офицерĕсем те Румынин нимĕçсен колонийĕ пулса тăнине ăнланса илме пуçларĕç. Пирĕн Трансильванине Гитлер Венгрие пачĕ. Нимĕçсем румынсене тивĕçсĕр сыпсем сырăнне хураççĕ, юрăхсăр чĕр-чунсем тесе шутлаççĕ. Эпĕ кирек мĕнле майпа та пулин Румынине вăрçăран кăларасчĕ тесе шухăшлакан салтаксемпе офицерсене сахал мар пĕлетĕп.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Ленинград облаçĕнчи Дедовичски районра вуншар яла çĕмĕрсе тухса çунтарса янă. Унта вĕсем 2.265 пӳрте, колхозниксен 1.317 хуçалăх çуртĕсене тата 76 шкулпа клуба тата культурăллă ытти учрежденисене çунтарса янă. Çав районри 26 ялта гитлерла палачсем 340 мирлĕ çынна, вăл шутра пĕчĕк ачасемпе хĕрарăмсене те, çакса вĕлернĕ е персе пĕтерхнĕ.

* * *

Оккупациленĕ Францин тĕрлĕ районĕсенче ирĕклĕ стрелоксен отрячĕсене организациленĕççĕ. Çав отрядсем гитлеровецсене пĕтереççĕ, хĕçпăшал складĕсене тытса илеççĕ, нимĕçсен çыхăнăвĕсене пăсса йĕркерен кăлараççĕ. Çавăн пек ирĕклĕ стрелоксен Уаза департаментĕнче кĕрешекен отрячĕ пĕр уйăх хушшинче нимĕçсен 57 салтакне тата 4 офицерне вĕлернĕ. Крэльпе Компьен хушшинче ирĕклĕ стрелоксем оккупантсен товарнăй поездне ӳпĕнтерсе янă. Парижри урамсенчен пĕринче ирĕклĕ стрелоксен ушкăнĕ нимĕç офицерĕсем ларса пыракан автомобиле тытса чарнă. Патриотсем виçĕ гитлеровеца персе пăрахнă та автомобильне илсе кайнă.

## Сентябрĕн 22-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Моздок** районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче палăрă улшăнусемех пулман.

* * *

Сталинград районĕнче хаяр çапăçусем пынă. Пирĕн чаçсем противникăн темиçе атакине сирсе янă, уйрăм участоксенче вĕсем малалла куçнă. Совет артиллеристĕсемпе минометчикĕсем нимĕçсен 10 танкне, тĕрлĕ грузсем тиенĕ 48 автомашинине, артиллерин 2 батарейине, автоматлă 2 тупă тата 5 станковăй пулемет пĕтерсе тăкнă, артиллерин 6 батарейине тата минометсен 7 батарейине пусарса лартнă. Н-ски гвардейски чаçăн боецĕсем, противникпа вăйлăн çапăçса, нимĕçсен 400 салтакне офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 3 танк тата 2 бронемашина пĕтерсе тăкнă.

* * *

Моздок районĕнче совет войскисем нимĕçсен фашистла войскисемпе вăйлăн çапăçнă. Пĕр участокра противникăн танкĕсемпе пехоти пирĕн çирĕплетнĕ рубежсене атакăланă. Çапăçура нимĕçсен 5 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тепĕр участокра гитлеровецсем, пысăк çухатусем тӳссе, пĕр высотăна тата халăх пурăнакан пункта тытса илнĕ.

Авиаци чаçĕн комиссарĕ Шаповалов юлташ нимĕç самолечĕсен пĕр ушкăнĕпе çапăçса, противникăн истребительне персе ӳкернĕ. Нимĕç летчикне тыткăна илнĕ. Вăл сывлăшри опытлă пират пулнă, мирлĕ совет хулисемпе ялĕсене бандитла тапăннăшăн ăна тăватă тимĕр хĕрес парса наградăланă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче халăх пурăнакан пунктшăн çапăçусем пынă. Пирĕн часть противник тăракан вырăна çĕмĕрсе кĕрсе кайнă та ăна каялла чакарнă. Гитлеровецсем контратака тунă, анчах та вĕсене каялла сирсе янă тата пысăк çухатусем тӳстернĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 вилли ытла выртса юлнă. Пирĕннисем 6 миномет тата темиçе пулемет тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Белоруссири партизансен отрячĕ пĕтĕрне хушшинчи çапăçусенче противникăн войскисем ларса пыракан 33 вагона, боеприпассем тиенĕ 27 вагона, автомашинăсем тиенĕ 10 платформăна тата 52 пушă вагона пĕтерсе тăкнă. Кунсĕр пуçне, партизансем нимĕçсен 3 танкне пĕтерсе тăкнă тата чугунçул рельсисене 3.200 метр тăршшĕ вырăнта сирпĕнтерсе янă. Çав вăхăт хушшинче партизансем 300 нимĕç салтакне тата 43 офицера пĕтерсе тăкнă.

* * *

Вилнĕ нимĕç салтакĕ Георг çумĕнче вăл арăмĕ Елиза патне яма çырнă çырăва тупнă. Çав çырура çапла каланă: «Эпир Кавказра. Вырăс летчикĕсем пирĕн çине 14 кун хушши бомбăсем пăрахса тăчĕç. Иртнĕ çĕрле вĕсем 50 хутчен тапăнчĕç. Вилнисемпе аманнисем питĕ нумай. Вĕсем ăçтан çавăн чухлĕ нумай самолет илни манпа манăн юлташсемшĕн халĕ те юптармалли юмах пек пулса тăрать-ха... Тухса кайăпăр-ши эпир çак çĕршывран, е эпир пурте çакăнтах вилсе пĕтĕпĕр-ши?».

* * *

Ленинград облаçĕнчи Заречье ялĕ сывăхĕнче нимĕçсен фашистла бандичĕсем «Красный Остров» колхозăн бригадирне Егор Осипова тытнă та ăна партизансен лагерĕ ăçтине кăтартма хушнă. Колхозник — эпĕ хамăн çемьене шыратăп, партизансем çинчен нимĕн те пĕлместĕп, тенĕ. Гитлерла ирсĕрсем Осипова тиокеррĕн асаплантарнă. Вĕсем колхозника маййĕнчен вĕренпе çыхса, ăна виçĕ хутчен çакса хунă, виçĕ хутчен йăлăран вĕçерсе янă. Осиповран нимĕнле хыпар та илеймесĕр, нимĕç бандичĕсем ăна персе вĕлернĕ.

* * *

Билгорай районĕнче (Польшăра) нимĕçсен карательнăй отрячĕ виçĕ поляк ялне çаратса пĕтернĕ. Хăйсен гарнизонне тавăрăннă чухне карательсем нимĕç помещикĕн именине çĕр выртма чарăннă, унта вĕсем ĕçсе ӳсĕрĕлсе алхаснă. Çĕрле поляк патриочĕсен ушкăнĕ çав имение вут тĕртнĕ те нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 37 çынна пĕтерсе тăкнă.

### ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕНЧЕ

**Ӳкерчĕк çинче:** Пирĕн земляк старши политрук **М. Н. Якимов.** Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче хастарлăх кăтартнăшăн Правительство ăна «За отвагу» медальпе наградăланă.

## Сывлăшра тăшманăн самолетне самолетпа пырса çапнă хыççăн

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрĕн 18-мĕшĕ. **(ТАСС спецкорĕ).** Боевой задание пурнăçа кĕртнĕ хыççăн, совет истребителĕсен ушкăнĕ аэродрома таврăнма пуçнă. Фронт сывăхĕнчи пĕр хула патне çывхарса пынă чухне летчиксем çав хула çинелле вĕçекен тăшманăн бомбардировщикĕсене асăрханă. Старши сержант Борис Гомолко хăвăртăн çӳлелле вĕçсе хăпарнă та «Хейнкель» патне çывăхах пырса çитнĕ. Çамрăк пилотăн сывлăшри пĕрремĕш çапăçăвĕ пуçланса кайнă. Пулеметран тĕл персе, Гомолко тăшманăн самолетне вут тивертнĕ.

Тепĕр «Хейнкелĕн» çулне пӳлме тăрсан, Гомолко хăйĕн боеприпассем пĕтнине асăрханă. Вара хăюллă пилот тăшманăн самолетне хăйĕн самолечĕпе пырса çапма шут тытнă. Мĕнпур хăвăртлăхпа вĕçсе пырса, Гомолко хăйĕн самолечĕн çуначĕпе «Хейнкеле» çапнă. Тăшманăн машини сывлăшра ишĕлме тытăннă. Вăйлă çапăннипе летчик хăйне самолет ларкăчĕ çумне çыхса лартнă чĕнсем татăлса кайнă та Гомолко кабинăран тухса ӳкнĕ. Вăл хăйĕн парашютне уçса яма хăтланнă, анчах çав вăхăтра хăйĕнчен инçех те мар нимĕç парашют сарăлнине асăрханă. Вĕсем нимĕç летчикĕсем пулнă. Çĕр çине вĕсенчен маларах çитес тесе, Гомолко хăйĕн парашютне çĕр патне çитесси 100 метр юлсан кăна уçса янă. Çĕр çине анса çитсен, летчик гитлеровецсенчен пĕрне тапăннă, леш хирĕç тăрсан, ăна персе пăрахнă. Нимĕçсен иккĕмĕш летчикне çавăнта пырса çитнĕ совет боецĕсем тытса чарнă.

Фронтăн Çар Совечĕн приказĕ тăрăх, Гомолкăна мастерлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн Ленин орденĕпе наградăланă.

## Геройсем çуралнă колхозсенче

СОВЕТСКОЕ. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçăра хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă Совет Союз Геройĕсен — Федот Орловпа Борис Васильев юлташсен тăван колхозĕсенчи колхозниксем пĕтĕм ĕçе сĕнтерӳ тăвас кăмăлпа туса пыраççĕ.

Ф. Орлов юлташ çуралнă ялти «Большевик» колхоз малтанхи вăхăтра юлса пыратчĕ. Орлова чысласа пулса иртнĕ митингра колхозниксем хăйсен колхозне мала кăларма обязательство илнĕччĕ. Вĕсем çав обязательствăна чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Кашни кун хĕрӳллĕ ĕçлесе, ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса пыма тăрăшаççĕ: тырпула кăтартнă срокра вырса пĕтерчĕç, кĕлтесене те итемсем çине кĕртсе çитерчĕç, çĕрулми кăларса пĕтерчĕç, халĕ виçĕ молотилкăпа кунĕн-çĕрĕн авăн çапаççĕ.

Ку колхозăн кăçал тырпул тухăçлă пулчĕ. Малтанлăха палăртнă тăрăх, тĕштырăсем кашни гектартан 14—15 центнер тухаççĕ. Колхоз государствăна тырпул памалли обязательствăсене çитес кунсенчех пурнăçласа çитерет. Кăçалхи çулшăн аш-какай, çу, çăм парса татнă. Колхозниксем халĕ малтанхинчен темиçе хут ĕçчĕнрех. Вĕсем кун-каçипех хĕрӳллĕ ĕçре. Орловăн инкĕшĕ—Варвара Орлова колхозри пĕр ĕçрен те юлмасть, вăл ытти колхозниксене ĕçре пример кăтартса пырать.

Колхозăн пур ĕçĕсем те вăхăтра пулса пыраççĕ.

«Страж революции» колхоз членĕсем хăйсен землякне—Совет Союз Геройне Б. М. Васильев юлташа уборка ĕçĕнче çитĕнӳсем туса чысласçĕ. Колхоз тырпула вăхăтра пухса кĕртрĕ, авăн çапса пĕтерес тесе тимлесе ĕçлет. Халĕ икĕ молотилка пĕр чарăнмасăр ĕçлеççĕ. Техникăллă культурăсене вăхăтра пухса кĕртрĕ. Колхозниксем пысăк тухăçлă çĕрулми, пахча-çимĕç туса илчĕç. Кăçал колхоз кашни гектартан ыраш 16 центнер, сĕлĕ 15 центнер, тулă 14 центнер, пăрçа 12 центнер туса илчĕ. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнни ĕçре паха ӳсĕмсем тума май пачĕ. Колхоз тырă татмалли обязательствăсене пурне те пурнăçларĕ. Хĕрлĕ Çар фондне 47 центнер тырă хыврĕ. Герой амăшĕ Вера Васильевăпа мăн аппăшĕ Анна Васильева ĕçрен нихăçан та юлмаççĕ, примерлă ĕçлеççĕ.

«Большевик» тата «Страж революции» колхоз членĕсем, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва тухса, ĕç фронтĕнчи геройсем пулма, фронта ытларах пулăшса пыма обязательствăсем илчĕç.

**Якоз СИГАЕВ.**

## Хастарлăн авăн çапаççĕ

КАЛИНИНО. Анат Карачурари «Социализм çулĕпе» колхоз членĕсем кунĕн-çĕрĕн авăн çапаççĕ. Д. Игнатьева, В. Шорникова, В. Трефилова, Ан. Михайлова колхозницăсем молотилкăпа авăн çапнă çĕрте куллен ĕç нормине 130—150 процент тултарса пыраççĕ.

**Б. ШОРНИКОВ.**

## Фронтри пек ĕçлеççĕ

ИЕПРЕÇ. Тури Клешкассинчи «Коминтерн» колхоз (председателĕ коммунист С. Ухтяков) кăçал ялхуçалăх ĕçĕсене вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек туса пырать, колхозниксемпе колхозницăсем уйхирте ывăнма пĕлмесĕр, фронтри пек ĕçлеççĕ. Вĕсем кăçал 339,6 гектар çине çичи пучахлă тыррулсене тата пăрçа йышши культурăсене районри колхозсенчен малтан — 20 ĕç кунĕнче — пысăк пахалăхпа пухса кĕртнĕ. Уборкăра 147 çын тата 2 жнейка, 3 косилка, 34 кĕреплеллĕ çава ĕçленĕ. Тырă выромалли машинăсемпе 204 гектар (61 процент), кĕреплеллĕ çавасемпе 52,47 гектар (15,7 процент), алăпа 48,65 гектар (14,5 процент) вырнă. Кунта машинăсемпе туллин усă курни тыррулсене хăвăрт пухса кĕртме май панă.

Уборка ĕçĕсенче кăçал колхозниксем нихăçанхинчен те лайăхрах, тимлĕнрех ĕçленĕ, нормăна кашни колхозник тултарса пынă. Машинăпа тырă выракансем Г. Иванов, М. Тимофеева, Н. Филиппов ĕç нормине кашни кун 120—150 процент, кĕреплеллĕ çавасемпе çулакансем А. Васильева, В. Макарова, М. Куракова — 180—200-шер процент, алăпа выракансем Ф. Павлова, Е. Кузьмина, М. Павлова 200-шер процент тултарса пынă. Уборкăра куçса килнисем те стахановла ĕçленĕ.

Тырă вырма пухнă хыççăн 5 кунран авăн çапма тытăнса, паянхи куна кĕрхи тырăсене çапса пĕтернĕ. Кĕлтесене пĕтĕмпех капана хывса лартнă. Çуртырисене çапас ĕç хĕрӳллĕн пырать. Молотилкăна талăкра 20 сехет ытла ĕçлеттерсе, нормăна 150 процента çити тултарса пыраççĕ. Авăн çапассине октябрĕн 1-мĕшĕччен вĕçлессишĕн кĕрешеççĕ.

Кĕрхине пысăк пахалăхпа вĕçсе срокра туса ирттернĕ. Колхоз планпа ирттерсе 20 гектар тырă акса хăварнă.

Колхозниксемпе колхозницăсем государство умĕнчи обязательствăсене срокра тултарасси — тăван çĕршыв умĕнчи пĕрремĕш тивĕç тесе шутлаççĕ. «Тăван çĕршыв умĕнче парăмлă пулар мар» текен лозунга тĕпе хурса ĕçлеççĕ. Çак бригада çумне 9 лаша çирĕплетсе панă. Бригада авăн ĕçлеиипе тырă памалли графика кашни пилĕккунлăхрах тултарса пыраççĕ. Çак иртнĕ 7-мĕш пилĕккунлăхри графика 184 процент тултарнă.

Халĕ колхозниксемпе колхозницăсем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăннă. Ялхуçалăх ĕçĕсене Октябрь уявĕ тĕлне вĕçлесе çитерес тĕлĕшпе тата государство умĕнчи пур обязательствăсене те тултарас тĕлĕшпе конкретнăй обязательствăсем илнĕ.

**Д. МИХАЙЛОВ.**

## Укçа-тенкĕ парăмĕсене срокчен парса татаççĕ

КАЛИНИНО. Карачура ялсоветĕнче финанс агенчĕ А. Егорова юлташ хăйне шанса панă ĕçе вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек туса пырать. Финанс ĕçне ялсоветне кĕрекен колхозсенчи активистсене хутшăнтарса, ĕçсынисем хушшинчи политикăллă-массăллă ĕçе тĕпе хурса туса пырать.

Çавна пула ĕнтĕ колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен государство умĕнчи укçа-тенкĕ парăмĕсене срокчен парса татаççĕ. «Социализм çулĕпе» колхозри колхозница красноармеец амăшĕ Е. Якимова юлташ 1942 çулхи ялхуçалăх налогне извещение алла илсенех пĕтĕмпех парса татрĕ. Унăн халь государство умĕнче нимĕнле парăм та çук.

Çавăн пекех «Ленин çулĕпе» колхозри К. Смирнова, А. Титов, Е. Сапожникова, «Социализм çулĕпе» колхозри И. Ефимов, Н. Макаров, Ил. Петров юлташсем çак çулхи ялхуçалăх налогĕпе страховка парăмĕсене срокчен парса татрĕç.

**Бор. ШОРНИКОВ.**

# Ют çĕршывсенче

## Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче Европăн хĕвеланăçĕнче наступлени пуçласа ярассишĕн тухса каланисем

НЬЮ-ИОРК, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери студентсен Вашингтонри съездĕнче пулнă Совет делегачĕсене — Красавченко, Павличенко тата Пчелинцев юлташсене хисеплесе, профсоюз организацийĕсем Нью-Иоркра массăллă митинг пухнă. Митингра 6 пин çын пулнă.

Митинга пухăннă халăх пĕр кăмăллă пулса йышăннă резолюцире çапла каланă: «Тĕнĕл держависен хĕçпăшаллă вăйĕсем пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех пĕр çул ытла ĕнтĕ Европăра Совет халăхĕсене паттăр Хĕрлĕ Çарĕпе вăрçнă çĕрте пухăнса тăнă чухне Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Англия иккĕмĕш фронт уçас тĕлĕшпе ку таранччен нумай хутчен пулса иртнĕ лайăх майсемпе усă курмасăр тăни шиклентерет, иккĕмĕш фронт вăл—Гитлера тата фашистсен тĕнĕлĕнчи ытти держависене пĕтермелли тĕрĕс çул пулса тăрать,— тенĕ. Митингра пухăннă халăх Рузвельт президента «Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Совет Союзĕ тата Англия иккĕмĕш фронт уçас тĕлĕшпе пĕрпĕрипе каласса татăлнă сăмаха мĕн май килнĕ таран хăвăртрах пурнăçа кĕртмешкĕн» пĕтĕм вăйпа пулăшма пулчĕ.

Çак вăрçăра Совет Союзне пулăшу парса тăма тунă комитет советсен виçĕ морякне—Совет Союз геройĕсене Афанасьев, Петровский тата Сказенок юлташсене, Ленин орденĕпе наградăланă Совет теплохочĕн командин членĕсене хисеплесе Нью-Иоркра пуху туса ирттернĕ. Пухура 1.400 çын пулнă. Ораторсем Хĕвеланăç Европăра халех иккĕмĕш фронт уçма кирли çинчен каланисене пухури халăх кашниччех нумайччен алă çупса хапăл туса йышăннă.

## „Дюнкеркшăн тавăрар"

### Хупер майор „Рейнольдс ньюс" хаçатра çырни

ЛОНДОН, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). «Рейнольдс ньюс» хаçатра Хупер майорăн статьине пичетленĕ; Хупер вăл Англипе Совет Союзĕн пĕрле туслăн пурăнмалли çинчен темиçе çул хушши туха-туха каланипе паллă пулса тăрать.

«Пирĕн иккĕмĕш фронт валли çынсем пур-и?—тесе çырать автор.—Пирĕн пысăк вăйсем пур пулас. Пирĕн хамăрăн войскăсем, канадцăсем, американецсем—пурте вĕсем приказа кĕтеççĕ. Вĕсем çав ĕçе вĕреннĕ ĕнтĕ; çар министерствин сентябрĕн 2-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă обзорĕ тăрăх шутласан, Европăна пырса кĕрес ĕçе январь уйăхĕнчех хатĕрлеме тытăннă. Пирĕн боевой хăват чĕрĕ вăй çитменнипе мар, суднăсем çитменнипе пăртак чакать. Паллах ĕнтĕ, часрах çĕнтерес тесе тата пирĕн союзниксене пулăшас тесе, пирĕн çĕршывăн халăхĕ халь продовольстви турттарса çӳрекен суднăсене пушатмашкăн хăйĕн пурнăç шайне ирĕклĕнех чакарма хатĕр. Çакна астутарас пулать: суднăсем Дюнкеркран Англи войскисене 250 пин çынна илсе килнĕччĕ, çак ĕçе малтан хатĕрленмесĕр тунăччĕ тата ăна темиçе кун хушшинчех организациленĕччĕ. Çапла ĕнтĕ, Дюнкерк историне тепĕр хут хирĕçле май туса ирттерме, Дюнкеркшăн тавăрма пулать».

## ЛЮКСЕМБУРГРИ ПĔТĔМĔШЛЕ ЗАБАСТОВКА ÇИНЧЕН

### *Хэлл ноти*

ЛОНДОН, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государственнăй секретарĕ Хэлл Люксембургăн Вашингтонри посланникне янă нотăра çапла каланă: Америка халăхĕ Германия Люксембургăн ирĕклĕхе юратакан халăхне тарçă туса хума тăрăшнине тата Люксембургăн çамрăкĕсене вăйпа Германи çарĕнче службăра тăратма тăрăшнине хăраса асăрхаса тăрать. Люксембург халăхĕ çавна пĕтĕмĕшле забастовка туса ответленĕ. Германия çав забастовкăна вăйпа тата хаярлăхпа пусарса лартма пултарать, анчах та вăл Люксембург халăхĕн вăйлăн хирĕç тăрас кăмăлне нихăçан та çапса хуçма пултараймасть, тенĕ.

## Франци рабочийĕсем гитлерла хуçасене хирĕç тăраççĕ

СТАМБУЛ, сентябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерла хаçатсен те çакна йышăнма тивнĕ: Франци рабочийĕсене Германири предприятисенче ĕçлеме пухса ярас кампани Гитлерăн ĕмĕтне пурнăçа кĕртеймен, Франци халăхĕ вăл кампание питĕ вăйлăн хирĕç тăнă.

«Зюст эко» хаçат çапла пĕлтерет: Германин даннăйĕсем тăрăх, июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа икĕ уйăх çурă вăхăт хушшинче пĕтĕм Францире Германие яма мĕнпурĕ 10.800 квалификациллĕ рабочи пухнă. Çав вăхăт хушшинче пухнă квалификацисĕр рабочисен хисепĕ, хаçат шучĕпе, 30 пин çынран иртмест. Хаçат çакна начар тесе шутлать, вăл Лаваль йышăннă мерăсемпе килĕшсе тăмасть, тет. Хаçат çак юлашки 4 уйăх хушшинче Францире 400 предприятие хупнине астутарать. Ĕçсĕр тăрса юлнă рабочисем Германие каяççĕ тесе ĕмĕтленни вырăнсăр пулса тăнă, тет. Хаçат Лавале Германие уйрăм рабочисене çеç мар, пуринчен ытла унта хупакан предприятисен пĕтĕм коллективĕсене яма хушать.

«Тан» хаçат çапла калать: «Германире пулса курнă нумай французсем рабочисене унта кайма канаш памаççĕ, вĕсем рабочисене Германире пурнăç ытла та начарри çинчен кала-кала параççĕ». «Аксьон франсез» хаçат çапла тарăхса çырать: Германие ыракан француз рабочийĕсем уççăнах çапла калатчĕç: эпир Германие Францире пире тата пирĕн çемьесене продовольстви карточкисемсĕр тăратса хăварассинчен хăраса çеç каятпăр, тетчĕç, тет.

## Индири законсем кăларакан центральнăй собранин ларăвĕ

ДЕЛИ, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Индири законсем кăларакан центральнăй собрани çĕршыври лару-тăру çинчен тăватă кун хушши сӳтсе-явнă.

Инди правительствин юстици министрĕ Султан Ахмед собранире çапла каланă: пĕтĕм Индире хумханусем сиксе тухрĕç тата Индин историйĕнче халиччен пулман саботажла ĕçсем питĕ хăвăрт сарăлса кайрĕç. Елĕк Конгресс майлă правительствăсем пулнă провинцисенче уйрăмах вăйлă хумханнă», тенĕ. Министр сăмахĕ тăрăх, халăх хумханнăшăн Конгресс ответлă пулса тăрать. Инди правительстви конгресситсене арестленине законлă тесе йышăннă, тенĕ.

Законсем кăларакан собранин Пенджабран суйланнă членĕ Сант Синг çапла каланă: тăшмана вăйлăн пырса çапмалли чи лайăх май вăл—çĕршыври хумханусене пĕтерсе лартни пулать, çакă вăл правительствăран килет. Правительствăн «Индие халех никама пăхăнманлăх прави памалла, конгресситла организацисене ĕçлеме чарнине халех пăрахăçа кăлармалла, Гандине тата Конгресăн ытти членĕсене халех ирĕке кăлармалла, штрафсене пăрахăçа кăлармалла, центрти тата провинцисенчи законсем кăларакан собранисене салатса ярса, çитес вăхăтрах вĕсене çĕнĕрен суйламалла, Конгреса тата мусульмансен лигине центрта вăхăтлăх нациллĕ правительство тума хушмалла. Икĕ парти те правительство тума килĕшмесен, ăна тума Конгреса хăйне хушмалла. Конгресс та килĕшмесен, мусульмансен лигине правительствăна суйлавсем туса ирттериччен организацилеме хушмалла», тенĕ.

Законсем кăларакан центральнăй собранин виçĕ членĕ—Конгреса кĕмен партисен представителĕсем пулса тăраканскерсем—мусульмансен лигин лидерĕ Джинна, Зафар Алихан тата профсоюзсен лидерĕ Джоши хăйсен собранире тухса каланă сăмахĕсенче Индие халех никама пăхăнманлăх прави пама ыйтнипе пĕр шухăшлă пулнă.

Профсоюзсен лидерĕ Джоши граждăнла пăхăнманлăх движенине сивленĕ. Анчах та вăл—никама пăхăнманлăх правине ыйтни пĕтĕм Инди ыйтни пулса тăрать, тенĕ.

Джоши хăйĕн çĕршывĕн çыннисене «çĕршыва японецсенчен хӳтĕлемешкĕн мĕн тума пуррине пурне те тума «сĕннĕ» «çавна тума пурин те пĕрлешмелле», тенĕ.

**Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.**


СОВХОЗ „РОСГЛАВВИНО" (гор. Чебоксары, ул. Коммунальная Слобода, 20), имеет в продаже посадочный материал разных сортов—яблонь, смородину, малину. Отпуск производится всем гражданам.
9—5 Дирекция.

**ТРЕБУЮТСЯ:**
главные бухгалтера, ст. бухгалтера, бухгалтер-ревизор, бухгалтера, счетовод-кассир.
Обращаться: г. Чебоксары, ул. Ленина, 64, к главному бухгалтеру. Тел. 2—93.
2—2

**Трест производит набор учащихся**
на курсы по подготовке водителей машин
Срок обучения 1,5 месяца.
Курсанты обеспечиваются общежитием и стипендией. Принимаются мужчины и женщины.
Обращаться по адресу: ул. Володарского. Дом печати, комната № 46, с 14 до 16 час. ежедневно. 2—2

**Пропал жеребенок**
Приметы: кобыла, кличка „Чебчек", рождения 1941 года. Знающих о местопребывании просим сообщить по адресу: Чебоксарский район, Лапсарский сельсовет, правление колхоза имени Крупской.



РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ_11538 Типографи № 1 Управления полиграфипромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 53 24 п. н.